2022-2023-мĕш вĕренӳ çулĕ

Шкул шайĕнчи олимпиада

Чăваш чĕлхипе литератури (Чăваш шкулĕ)

7 класс

Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вăхăт – 90 минут

1.Çак йĕркесен авторне тĕрĕс палăртăр. Пĕрремĕш клеткăна автор хушамачĕн малтанхи сас паллине çырăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.*

*Юрататăп вуламашкăн*

*Чăвашла та вырăсла.*

*Ик чĕлхе вăл - ик ăс маншăн*

*Эп пуласшăн ик ăслах!*

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|

2. *Луг* сăмаха чăвашла куçарăр. Сăмахăн пĕрремĕш сас паллине иккĕмĕш клеткăна çырса хурăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.*

3. *Чăн _______ суйи çук.* Сиксе юлнă сăмаха тĕрĕс тупса палăртăр, пĕрремĕш сас паллине виççĕмĕш клеткăна çырса хурăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.*

*4. Асанне, анкарти, йысна, кукамай. Хăшĕ ытлашши?* Сăмахăн пĕрремĕш сас паллине тăваттăмĕш клеткăна çырса хурăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 3 балл.*

5. 1-мĕш ыйтура панă сăвă йĕркисенче хăш сăмах хыççăн чарăну палли сиктерсе хăварнă? Сăмахăн юлашки сас паллине пиллĕкмĕш клеткăна çырăр. Местоименисене тупса çырăр. *Сăмахне тĕрĕс тупнăшăн -3 балл, местоименисене çырнăшăн- 4 балл. Пĕтĕмпе – 7 балл.*

6. *Чăваш Республикинче Козловка ятлă район центрĕ пур. Район центрĕн ячĕ чăвашла мĕнле пулать?* Чăвашла ячĕн пĕрремĕш сас паллине улттăмĕш клеткăна çырăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.*

7. Иван Ахрат çырнă калаври кĕленчесем мĕнле пулнă-ши? Сăмахăн юлашкинчен иккĕмĕш сас паллине çиччĕмĕш клеткăна çырăр. *Тĕрĕс хуравшăн - 5 балл*

8. *Мĕн вăл вăйлату?* Сăмахăн виççĕмĕш сас паллине саккăрмĕш клеткăна çырăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.*

9. Çыравçăсен хайлавĕсене тĕрĕс шыраса тупăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 6 балл.*

1.Авторсем: Çемен Элкер, Сергей Павлов, Валентина Элпи.

2.Хайлав ячĕсем: «Ача вăййи мар», «Хĕн-хур айĕнче», «Илемлĕхе курма пӳрнĕ ача».

10. Хăвăр тавраçра çуралнă паллă чăваш çынни çинчен çырса парăр. *Тулли хуравшăн - 5 балл.*